• *Канашлу*

Хыçра – тăватă çул. Мĕн улшăннă?

Чăваш Ен Президенчĕ 2007 çулхи чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕнче кăларнă «Чăваш Республикинче ялти культура учрежденийĕсене аталантарас енĕпе пурнăçламалли мерăсем çинчен» Указ – ялсен территорийĕсене малалла аталантармалли тепĕр утăм. Çавна май вăл клуб учрежденийĕсен паянхи тĕнче йышăннă çĕнĕ моделĕсене туса хума май парасса, çынсен ăс-хакăлне, хутшăнăвĕсене улăштарасса шанатпăр. Ăна йышăннăранпа кĕçех тăватă çул çитет. Мĕн тунă çак тапхăрта? Ума лартнă тĕллевсем пурнăçа кĕреççĕ-и?

Çак кунсенче Чăваш патшалăх операпа балет театрĕн нумай тытăмлă залĕнче «Муниципалитет шайĕнчи культурăпа кану учрежденийĕсене тĕслĕх шая çĕклес ĕç мĕнле пыни çинчен» ыйтупа ирттернĕ канашлу эпир хускатнă калаçава уçăмлатрĕ.

Кун йĕркинче палăртнă тĕп ыйтупа ЧР культура министрĕн çумĕ Татьяна Казакова доклад турĕ. Çакă паллă пулчĕ: хальхи вăхăтра республикăра тĕслĕх клубпа кану учрежденийĕ 46. Йышлăраххисем Комсомольски, Муркаш районĕсенче – тăваттăшар, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă, Етĕрне, Елчĕк хутлăхĕсенче – виçшер. 2008-2010 çулсенчи вĕсен ĕç-хĕлĕ пирки çакна калама пулать: мероприятисен шучĕ 117 процент чухлĕ ӳснĕ, çав шутра тӳлевлĕ майпа ирттернисен – 118 процент таран. Унта хутшăнакансен йышĕ те 235 пинрен 285 пин çынна çитнĕ. Çавна май бюджет тулашĕнчи çăл куçран кĕнĕ нухрат 118 процентпа танлашнă.

Татьяна Васильевна хăйĕн сăмахĕнче ял клубĕн паянхи пĕлтерĕшĕ пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕ. «Вăл ял çыннине, уйрăмах çамрăксене, тĕрев паракан вырăн пулмалла. Кунта вĕсем дискотекăна хутшăнни çеç мар, чуна уçса калаçни, пĕр-пĕринпе хутшăнни, çывăхланни пĕлтерĕшлĕ, – терĕ. – Сумлă хăнасене йышăнни, юбилейсемпе презентацисем ирттерни – ялшăн паллă пулăм. Ку енĕпе Шупашкар, Елчĕк, Муркаш, Етĕрне, Элĕк районĕсенче начар мар ĕçлеççĕ. Клуб учрежденийĕсене хальхи вăхăтри оборудованипе тивĕçтерни, компьютер технологийĕсемпе пуянлатни музыка дискĕсем хатĕрлеме, регионсен шайĕнче мероприятисем йĕркелеме май парать».

Докладчик палăртнă тăрăх – тĕслĕх культура учрежденийĕсем профессионал коллективсемпе те çыхăну йĕркелеме пуçланă. Тĕслĕх клубсенче Операпа балет, Чăваш академи драма, Пукане театрĕсен, Чăваш академи симфони капеллин гастролĕсем, патшалăх музейĕсен куçса çӳрекен куравĕсем иртеççĕ. Ку енĕпе Элĕк, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Çĕрпӳ, Етĕрне районĕсенчи клуб учрежденийĕсем уйрăмах хастар-мĕн. Патшалăх театрĕсем пĕлтĕр 910 спектакльпе концерт кăтартнă, унта 208 пин куравçă хутшăннă /2009 çулта – 672 мероприяти, 170 пин куравçă/.

Татьяна Казакова туса çитереймен ыйтусем пирки те чарăнса тăчĕ. Сăмахран, хăш-пĕр район центрĕнчи культура керменне çӳрекенсен йышĕ чакнă иккен. Вĕсене унти кафе-барсем, канупа çыхăннă ытти центр кăсăклантараççĕ. Профессионал кадрсем /сасă режиссерĕсем, диджейсем/ çитменни те сисĕнет. Шел те, хăш-пĕр клуб информаци технологийĕнчен ютшăнать тейĕн. Пур пек хатĕрпе усă курма тăрăшмаççĕ. Культура учрежденийĕсене юридици сăпачĕ парас тĕлĕшпе /Улатăр, Патăрьел, Шупашкар районĕсемсĕр пуçне/ ĕç кал-кал пымасть.

Тĕслĕх культура учрежденийĕсен ĕç-хĕлне Халăх пултарулăх çурчĕ тишкерсе тăрать. Çавăнпа та канашлура унăн директорĕн Виктор Бондаревăн çĕннине каламалли сахал мар пулчĕ.

Тĕслĕх шая çĕкленнĕ клубсемпе культура çурчĕсенче «халăх» ята тивĕçнĕ 64 коллектив ĕçлет. Виктор Сергеевич Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнчи Атнарти, Муркаш енри Чуманкассинчи, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Сĕнтĕрпуçĕнчи, ытти хутлăхри культура ĕçченĕсен пуçарулăхне, вĕсем çĕнĕлле ĕçлеме пуçланине палăртрĕ. «Çĕнĕлле» тенине халăха явăçтарма пĕлни, культура учрежденийĕ тăван кил пек хăтлă, ăшă, чуна çывăх пулни те пытаннă. Çакна, сăмахран, Елчĕк районĕнчи Патреккел халăх хорĕнче юрлакан Луиза Скворцова тĕслĕхĕпе çирĕплетме пулать. «Репетицисене мăшăрпа çӳретпĕр. 1967 çулта пĕрлешнĕ хыççăн юрлама пуçларăмăр. Пĕррехинче шутласа пăхрăмăр та тĕлĕнтĕмĕр: çак тапхăрта икĕ пине яхăн концерта хутшăннă. Кремль сцени çинче те чăваш ятне çĕкленĕ. Халĕ çакăн пек типтерлĕ клуба савăнса çӳретпĕр, унта килти пек кăмăллă». Çакă мар-и чи пархатарли? Халăх пултарулăх çурчĕн директорĕн шухăшĕпе килĕшмелле – ĕçлеме кирлĕ условисем пурри пуçаруллă ертӳçĕсене малалла ăнтăлма май парать. Сăмахран, Элĕк ял тăрăхĕсен хушшинчи культурăпа кану центрнех илер. Унти Алина Судманăн проекчĕ /Элĕк районĕнчи тухнă официсем çинчен фильм ӳкересси/ кăçал ЧР Культура министерстви ирттернĕ конкурсра çĕнтерсе ЧР Президенчĕн грантне тивĕçнĕ.

Мĕн туса çитереймен? Мĕнле кăлтăксем тĕл пулаççĕ? Виктор Бондарев шухăшĕпе – директор-менеджер сахал. 46 директортан 24-шĕ аслă пĕлӳллĕ, 21-шĕ – ятарлă вăтам пĕлӳллĕ. Ятарлă пĕлӳллĕ пултарулăх ертӳçисем çитменни те ĕçе малалла кайма чăрмантарать. Хальхи вăхăтра тĕслĕх культура учрежденийĕсенче вăй хуракан 336 специалистран 44-шĕн /13 процент/ пĕлӳ çук. Патăрьел, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Çĕмĕрле районĕсенчи пултарулăх ертӳçисене 0,5 е 0,25 ставкăпа çеç ĕçлеттернине мĕнле ăнланмалла-ха?

ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ Владимир Мидуков çитес çулхи бюджет пирки чарăнса тăчĕ. Унта культура отраслĕ валли укçа-тенкĕ кăçалхинчен ытларах уйăрма палăртнине пĕлтерчĕ.

Мĕнле пĕтĕмлетӳ тума пулать-ха? Çӳлерех асăннă Указ ялти культурăна çирĕп тĕрев парĕ. Чăваш Ен малашлăхĕ мĕнле пуласси пирĕн клубсен ĕçĕнчен те килет. Хальлĕхе, шел те, пурте йĕркеллех теме иртерех-ха. Клуб ĕçченĕсен шалăвĕ те пысăк тесе мухтанмалли çук. Çавăнпах пултаруллă, тивĕçлĕ пĕлӳ илнĕ специалистсем юратнă ĕçĕнчен уйрăлнă тĕслĕх сахал мар тĕл пулать. Çакна республика ертӳçисем шута илни шанăça çĕклет. Сăмахран, 2012 çулхи пĕрремĕш кварталта отрасльте вăй хуракансен ĕç укçине ӳстерме палăртнă.

■ **Надежда СМИРНОВА**

• *Сезон уçăлчĕ*

Геннадий Воробьевăн хайлавĕсем çĕнĕрен янăрарĕç

Шупашкарăн авалхи пайĕнче Воробьев композиторсен урамĕ пур. Шел те, хула хăнисем çеç мар, Чăваш Енре пурăнакансенчен чылайăшĕ вĕсем мĕнле çынсем пулнине пĕлсех каймаççĕ.

Пирĕн халăхăн пирвайхи профессионал композиторĕсенчен пĕри, 1917 çултах Шупашкарта хор искусствине аталантарма пуçланă Василий Петрович Воробьев /1887-1954/ хальхи Тăвай районĕнчи Элпуç ялĕнче çуралса ӳснĕ. Иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче вăл Çĕрпӳ тата Шупашкар уесĕсенчи шкулсенче учительте, Шемшерти чиркӳ хорĕнче регентра, революци хыççăн республикăн тĕп хулинчи тĕрлĕ предприятире, музыка шкулĕнче, педагогика тата музыкăпа театр техникумĕсенче ĕçленĕ. 1924 çулта Федор Павлов педагог-композиторпа пĕрле хальхи Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамбльне йĕркеленĕ.

Чăвашсен пĕрремĕш симфонине хайланă /1937-1939/ Геннадий Воробьев 1918 çулхи çурла уйăхĕнче çут тĕнчене килнĕ. Ашшĕнчен тĕслĕх илсе пурне те пĕлме тăрăшакан ача 5-6 çултах музыка инструменчĕсемпе каланă, халăх юррисене шăрантарнă. Шупашкарти 1-мĕш шкулта вĕреннĕ çулсенчех пĕчĕк Гена тин çеç уçăлнă музыка шкулне хаваспах çӳренĕ. Кунта пур енĕпе те пултаруллă саккăрти ача фортепиано валли «Чăваш кĕвви» хайланă. 1930 çулта Гена Воробьева Мускав консерваторине пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти музыкăпа театр техникумне ĕçлеме килнĕ Владимир Кривоносов асăрханă. Вăл тата ашшĕ ертсе пынипе Геннадий Воробьев вун пилĕк çултах чăн-чăн композитор пулса тăнă. Çакăн пек тĕслĕх чăваш халăхĕн искусствипе культура аталанăвĕн историйĕнче урăх пулман.

1935 çулта Василий Петровичăн ывăлĕ музыкăпа театр техникумне лайăх паллăсемпе пĕтернĕ. 30-мĕш çулсен варринчех вун çиччĕри мал ĕмĕтлĕ каччă Мускав консерваторийĕнче вĕренме пуçланă.

Совет Союзĕн тĕп хулинче чăваш халăхĕн чи çамрăк композиторĕ çитмĕле яхăн юрă, романс тата сюита, камерлă инструментсен тата симфони оркестрĕсем валли пысăк çирĕм пĕр произведени хайланă. Вĕсене тĕрлĕ çулта тĕнчери чи паллă композиторсенчен пĕри Дмитрий Кабалевский, Мускав консерваторийĕн профессорĕ, СССР Патшалăх премийĕн лауреачĕ Николай Пейко, паллă композиторсемпе музыка деятелĕсем Роман Глиэр, Николай Мясковский, Василий Шебалин, Григорий Метинский, Борис Яворский пысăк хак панă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче Василий тата Геннадий Воробьевсен илемлĕ, хăватлă, яланлăхах асра юлмалли хайлавĕсем Шупашкарти, çавăн пекех Мускаври тата Раççейĕн тĕрлĕ регионĕн сценисем çинче тăтăшах янăранă. Шел те, çур ĕмĕр каярах, эстрада вăйлă аталанма пуçласан, концертсен программисенчен Воробьевсен хайлавĕсем çухалма пуçларĕç. Çак тĕслĕх юлашки çулсенче Чăваш патшалăх академи капеллин илемлĕх ертӳçине тата тĕп дирижерне, Раççей Федерацийĕн халăх артистне Морис Яклашкина уйрăмах пăшăрхантарнă. Çак кунсенче капеллăн 44-мĕш концерт сезонĕ Чăваш Республикин Президенчĕн грантне тивĕçнĕ «Геннадий Воробьевăн искусствăри вилĕмсĕр пуянлăхĕ» концертпа уçăлчĕ.

■ **Петр СИДОРОВ**

• *Рейд*

Çурта вут-кăвартан сыхлар

"Пĕрре вĕри сĕтпе пиçнĕскер уйрана та вĕрсе сыпать", – тет чăваш. Анчах ку каларăша хăшĕ-пĕри асра тытмасть çав, малтанхи йăнăша тепре те тăвать, çакна пулах шар курать.

Акă юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Толик Хураски ялĕнче тухнă пушарта 50 çулти арçыннăн тата унпа çырăнмасăр пурăнакан 49-ти хĕрарăмăн пурнăçĕ татăлнă. Синкерлĕ çав кун кил хуçи мунча хутнă иккен. Шел, 7 çул каяллахи инкек – ун чухне мăшăрăн çурчĕ тĕпĕйĕрĕпе çунса кайнă – вĕсене асăрхануллăрах пулма вĕрентмен. Çакăн хыççăн шар курнăскерсем çулла – мунчара, хĕлле вара Çĕнĕ Шупашкарта пурăннă-мĕн...

Вут-çулăм алхаснă вырăна МЧС ĕçченĕсемпе пĕрле – вĕсем "Пурăнмалли çурт-йĕр" операципе килĕшӳллĕн шăпах рейда тухнăччĕ – çитсе курсан чун сӳлетсе илчĕ. Тĕтĕм-сĕрĕм шăрши те сирĕлсе пĕтмен пек туйăнчĕ. Анчах куççуль каларакан хăрушă ӳкерчĕк /çунса пĕтеймен пĕренесем, тăлăххăн курăнса ларакан кăмака, кĕл-кăмăк купи.../ çынсене çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлнисене çакăнта килсе "асăнмашкăн" кансĕрлемен, вĕсем хăйсем пушатнă эрех кĕленчине, сĕткен савăтне унтах хăварнă. Пушар тĕрĕслев лабораторийĕн экспертĕсем инкек сăлтавне тĕпчеççĕ, ахăртнех, вăл вутпа усă курнă чухне асăрханманнипе е кăмака юсавсăр пулнипе çыхăннă. Арçынпа хĕрарăм сĕрĕмпе чыхăнса вилнĕ.

"Çулталăк пуçланнăранпа пирĕн районта 70 ытла пушар тухнă. 6 çын пурнăçран уйрăлнă – синкерлĕ çак тĕслĕхсем пурте пурăнмалли секторта пулнă, – каласа кăтартать Шупашкар районĕнчи надзор ĕç-хĕлĕн уйрăмĕн пуçлăхĕ, шалти служба капитанĕ Николай Миронов. – Шел те, çынсенчен нумайăшĕ юсавсăр кăмакапа усă курни, электропралука тĕрĕс мар сыпăнтарни пысăк хăрушлăх патне илсе çитерме пултарни пирки шухăшласшăн мар. Хăшĕ-пĕри мунча хутсан кăмакана пăхсах тăмаллине манать."

Н.Миронов ертсе пыракан ушкăн Толик Хураскинчи темиçе хуçалăха кĕрсе курчĕ, çынсене асăрханă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме сĕнчĕ, пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркисене пăхăнма чĕнсе каларĕ, ас тумалăх çырнисене валеçсе пачĕ. Çитменлĕхсем вара чылай çĕрте пĕр евĕрлĕрех. Акă Аслă урамри пĕр гаражра инспекторсем газ баллонĕ пуррине курчĕç. Йĕркепе килĕшӳллĕн ăна пурăнмалли çуртра мар, уçăлтарма май пур вырăнта упрамалла. Хуçалăхра газ баллонĕ пурри çинчен асăрхаттару кăтартмăшĕ çакмалла. Рейда тухнисем ваттисен вăхăтлăх пурăнмалли уйрăмне те кĕрсе курчĕç. Инспекторсем каланă тăрăх – çак çуртра пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркине çирĕп пăхăнаççĕ, ку енĕпе пĕр-пĕр кăлтăк тупănсан ăна çийĕнчех пĕтереççĕ.

Кăкшăм урамĕнчи çуртра МЧС ĕçченĕсем юрăхсăра тухнă кипятильник тупрĕç. Тепĕр икĕ хуçалăхпа çывăхрах "паллашма" тӳр килмерĕ – унта пурăнакансене ялта надзор ĕç-хĕлĕн уйрăмĕн ĕçченĕсем çӳренине такам систерме ĕлкĕрнĕ пулас. Пĕрин хуçи, "хаяррине" кăмăллакан арçын, алăка темле шаккасан та уçмарĕ. Теприн картишĕнче вара тирпейсĕрлĕх хуçаланатчĕ: типнĕ çум курăк, вут пуленккисем, тĕрлĕ ăнăр-тапăр... Пирус тĕпне сӳнтермесĕрех пăрахсан е шăрăх çанталăкра кунта "хĕрлĕ автан" тухăмрах ташша ярĕ.

"Тĕрĕссипе, пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркине пăсакансене пирĕн административлă майпа явап тыттарма ирĕк пур. Чи пĕчĕк штраф – пин тенкĕ. Анчах "Пурăнмалли çурт-йĕр" операцин тĕп тĕллевĕ – явап тыттарасси мар, профилактика мероприятийĕсем ирттересси, çынсене тупса палăртнă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермешкĕн ӳкĕте кĕртесси. Асăрхаттарусене шута илмесен эпир тепĕр хутĕнче штраф тӳлеттерме пултаратпăр", – ăнлантарать Николай Миронов.

Хальхи вăхăтра Шупашкар тăрăхĕнче çеç мар, республикăн ытти районхулинче те "Пурăнмалли çурт-йĕр" операцин иккĕмĕш тапхăрĕ пырать. Пушар надзорĕн ĕçченĕсем çуртсен 70 процентне тĕрĕсленĕ те ĕнтĕ. Вĕсем йĕрке хуралçисемпе, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен представителĕсемпе рейдсем кулленех йĕркелеççĕ.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

Аслисен парни

● ***Кунта кĕçех пĕчĕк вăрман çĕкленĕ.***

Елчĕк районĕнчи Яманчӳрелĕнчи Шăмалаккасси урамĕ пуçланнă лаптăкра пĕр ярнере пĕчĕк вăрман «çитĕнсе» ларчĕ. Унта пурăнакансем – Николайпа Елена Васильевсем, Семен Воронцов, Антонина Мижерова, Лидия Титова, Александра Петрова, Илья Васильев – хăйсен пуçарăвĕпе йĕркелесе ирттернĕ çак ĕçе.

Лартмалли йывăçсене – пилешпе пан улмие, чăрăшпа хурлăхана – çывăхри вăрмантан, Патăрьелĕнчи питомникран илсе килнĕ. Карта валли вырăнти пилорамăра кирлĕ хатĕрсем тупăннă.

– 77 йывăç çитĕнĕ 30 сотка çĕр çинче, – тет Николай Васильев. – Ачасене вылямалли кĕтес те пулĕ. Аслисене ларса канма саксем тăвăпăр.

■ **Надежда ГЕОРГИЕВА.**

Светлана ЕРМАКОВА сăн ӳкерчĕкĕ

реклама пĕлтерӳ
Факс: /8352/ 28-83-70. E-mail:hypar2008@rambler.ru
Тел.: 28-83-70. 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

Саламлатпăр



Юратнă çыннăмăра – Канаш районĕнчи Вăтакас Татмăш ялĕнчи Петр Яковлевич ЯКОВЛЕВА – 80 çулхи юбилейпе саламлатпăр. Тулăх пурнăç, иксĕлми вăй-хăват, çирĕп сывлăх, телей сунатпăр. Мăшăрупа, ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнма тата вăрăм ĕмĕр пиллетпĕр.

Саламлаканĕсем – мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем, хăтитăхлачи.

ООО «РегионН», действующее по поручению ТУ Росимущества в ЧР, проводит **15 ноября 2011г.** с 09 ч.00 мин. по адресу: г.Чебоксары, Вурнарское ш., 11, открытые по составу участников и форме подачи предложений по цене торги по продаже арестованного имущества:

Лот № 1 - АМТС TOYOTA FUNCARGO, 2001 г.в., модель двигателя 2NZ, двигатель №1886085, кузов № NCP20-0196215, белого цвета, ПТС 25 №128681, свидетельство о регистрации 21СЕ 225884, нач. цена 59500 руб. (п.№02-22/4989К); **Лот № 2 -** АМТС марка LADA, модель 217030, 2008 г.в., цвет темно-вишневый, VIN XTA 2170308010298, нач. цена 243746 руб. (п.№02-22/5156М); **Лот № 3 -** прачечная, находящаяся по адресу: г. Чебоксары, пр. Тракторостроителей, д. 101 (112), литер-58, этажность-1-антресоль, площадь 957,6 кв.м, нач. цена 13600000 руб. (п.02-22/5326Меж); **Лот № 4** - гараж № 24, расположенный на цокольном этаже кирпичного пятиэтажного многоквартирного жилого дома по адресу: г. Чебоксары, ул. Талвира, д. 14, общей площадью 39,4 кв. м, назначение: нежилое, нач. цена 890000 руб. (п.02-22/6027Меж); **Лот № 5** - право аренды земельного участка КФХ Егоровой Г.М., общей площадью 5000 кв.м, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Шемуршинский р-н, с. Трехбалтаево, нач. цена 1000 руб. (п.02-22/6035Шем); **Лот № 6** - земельный участок, расположенный по адресу: г. Новочебоксарск, ул. Промышленная, д. 57Д, площадью 5970 кв. м, категория земель: земли населенных пунктов, разрешенное использование: для содержания и эксплуатации арочного хранилища, нач. цена 3050000 руб. (п.02-22/5955Меж); **Лот № 7** - трехкомнатная квартира, расположенная по адресу: г. Новочебоксарск, ул. Винокурова, д.74, кв. 36, общей площадью 63,8 кв. м, принадлежащую на праве общей долевой собственности Яковлевой А.Н., Газизовой Е.Л., по 1/2 доли в праве, нач. цена 2250000 руб. (п.02-22/5956Л); **Лот № 8** - телятник-откормочник, площадью 212,8 кв.м, 2006 г.п., расположенный по адресу: Шемуршинский район, с. Трехбалтаево, нач. цена 981750 руб.(п.02-22/4718Шем); **Лот № 9** - свинарник-маточник, площадью 237,09 кв.м, 2006 г.п., расположенный по адресу: Шемуршинский район, с. Трехбалтаево, нач. цена 1071000 руб.(п.02-22/4718Шем); **Лот № 10** - квартира, расположенная по адресу: г. Чебоксары, ул. Пирогова, д. 2, кв. 43, площадь 168,3 кв.м, нач. цена 3996955руб. (п.02-22/5414М); **Лот № 11** – квартира, площадью 65,7 кв.м, расположенная по адресу: г. Чебоксары, ул. Кадыкова, д. 30, кв. 348, нач. цена 1440750 руб. (п.02-22/5532К); **Лот № 12** – квартира, расположенная по адресу: г. Чебоксары, ул. Матэ Залка, д. 6, корпус 12, кв. 103, общая площадь 33,2 кв.м, нач. цена 986000 руб. (п.02-22/5514М).

Задаток 5% от начальной цены. Шаг аукциона - 1% от начальной продажной цены. Задатки и заявки на участие в торгах принимаются, начиная с 02.11.2011г. по 11.11.2011г. включительно с 08.00 до 17.00ч. с перерывом на обед с 12.00 до 13.00. Подведение итогов приема заявок - 14 ноября 2011 г. в 9.00 часов по адресу: г.Чебоксары, Вурнарское ш., 11, телефон для справок 52-42-55, 44-07-49.

05 декабря 2011г. с 09 ч.00 мин. по адресу: г. Чебоксары, Вурнарское ш., 11, открытые по составу участников и форме подачи предложений по цене торги по продаже арестованного имущества:

Лот № 1 - автокран КС- 35714, нач. цена 1500000 руб, (п.02-22/5891М); **Лот № 2** - грузовой тягач седельный IVECO STRALIS-430, 2003 г.в., цвет кузова серебристый, нач. цена 900000 руб. (п.02-22/5895М); **Лот № 3 -** прицеп Van HOOL , 1998 г.в., нач. цена 270000 руб. (п.02-22/5895М); **Лот № 4** – АМТС Mercedes-Benz, 1995 г.в., черного цвета, нач. цена 210000 руб. (п. 02-22/6134М); **Лот № 5** - АМТС Peugeot 307, 2007 г.в., цвет темно-синий, нач. цена 150000 руб. (п.02-22/5302Кан); **Лот № 6** - баня (литер Г) с предбанником (литер Г1), площадью застройки 20,15 кв.м, расположенная по адресу: Чувашская Республика, Урмарский р-н, с. Шоркистры, ул. Советская, д. 30, нач. цена 8500 руб.(п.02-22/5158М).

Задаток 5% от начальной цены. Шаг аукциона - 1% от начальной продажной цены. Задатки и заявки на участие в торгах принимаются, начиная с 02.11.2011г. по 16.11.2011г. включительно с 08.00 до 17.00ч. с перерывом на обед с 12.00 до 13.00. Подведение итогов приема заявок - 21 ноября 2011 г. в 9.00 часов по адресу: г.Чебоксары, Вурнарское ш., 11, телефон для справок 52-42-55, 44-07-49.

К участию в торгах допускаются юридические и физические лица, представившие в оговоренные в извещении сроки, оформленные надлежащим образом следующие документы: 1) заявку на участие в торгах по установленной форме; 2) платежный документ с отметкой банка об исполнении, подтверждающий внесение претендентом задатка в счет обеспечения оплаты приобретаемого имущества в соответствии с договором о задатке, заключаемым с Продавцом до перечисления денежных средств в порядке, предусмотренном ст. 448 ГК РФ; 3) опись представленных документов, подписанную претендентом или его уполномоченным представителем, в двух экземплярах, с оригинальной печатью юридического лица, один из которых с указанием даты и времени (часов, минут) приема заявки, удостоверенный подписью Продавца, возвращается претенденту; 4) надлежащим образом оформленную доверенность на лицо, имеющее право действовать от имени претендента, оформленную в соответствии с требованиями, установленными гражданским законодательством, если заявка подается представителем претендента. Физические лица предъявляют паспорт, копию паспорта, нотариально заверенную копию свидетельства о присвоении ИНН (при наличии). Физические лица дополнительно предъявляют нотариально заверенное согласие супруга или супруги на приобретение имущества. Юридические лица дополнительно представляют: 1) нотариально заверенные копии учредительных документов и копии свидетельства о государственной регистрации юридического лица, выписку из ЕГРЮЛ, выданную не ранее чем за 30 дней до проведения торгов. Иностранные юридические лица также представляют нотариально заверенные копии учредительных документов и выписки из торгового реестра страны происхождения или иного эквивалентного доказательства юридического статуса; 2) надлежащим образом оформленные и заверенные документы, подтверждающие полномочия органов управления и должностных лиц претендента; 3) надлежащим образом оформленное письменное решение соответствующего органа управления претендента о приобретении указанного имущества, в случае если это предусмотрено учредительными документами претендента и законодательством страны, в которой зарегистрирован претендент, подписанное уполномоченными лицами соответствующего органа управления с проставлением печати юридического лица, либо нотариально заверенные копии решения органа управления претендента или выписки из него; 4) копию бухгалтерского баланса на последнюю отчетную дату с отметкой налогового органа. Указанные документы в части их оформления и содержания должны соответствовать требованиям законодательства Российской Федерации. Иностранные физические и юридические лица допускаются к участию в аукционе с соблюдением требований, установленных законодательством Российской Федерации. Документы, представляемые иностранными лицами, должны быть легализованы в установленном порядке и иметь нотариально заверенный перевод на русский язык. Документы, содержащие помарки, подчистки, исправления и т.п., не рассматриваются. Одно лицо имеет право подать только одну заявку. Заявки подаются, начиная с опубликованной даты начала приема заявок до даты окончания приема заявок, указанной в настоящем извещении, путем вручения их лицу, уполномоченному Продавцом на прием заявок. Заявки, поступившие после истечения срока приема заявок, указанного в извещении, либо представленные без необходимых документов, либо поданные лицом, не уполномоченным претендентом на осуществление таких действий, Продавцом не принимаются. Претендент не допускается к участию в торгах, если: 1) представленные документы не подтверждают право претендента быть покупателем в соответствии с законодательством Российской Федерации; 2) представлены не все документы в соответствии с перечнем, указанным в извещении, либо они оформлены ненадлежащим образом; 3) заявка подана лицом, не уполномоченным претендентом на осуществление таких действий; 4) не подтверждено поступление в установленный срок задатка на счет, указанный в договоре о задатке; 5) в иных случаях, установленных действующим законодательством. Победителем торгов признается участник, предложивший наиболее высокую цену за продаваемое имущество. В день проведения торгов с победителем торгов подписывается протокол о результатах торгов. Оплата приобретаемого имущества производится в течении пяти дней с даты подписания протокола о результатах торгов. При отказе от подписания протокола о результатах торгов и невнесении денежных средств в счет оплаты приобретенного имущества, задаток победителю торгов не возвращается. Право собственности на имущество переходит к покупателю в порядке, установленном законодательством Российской Федерации. Расходы на оформление права собственности возлагаются на покупателя. Продавец оставляет за собой право снять выставленное имущество с торгов по указанию судебного пристава-исполнителя. Все вопросы, касающиеся проведения торгов, но не нашедшие в настоящем извещении, регулируются в соответствии с законодательством Российской Федерации. Получить дополнительную информацию об торгах и правилах его проведения, ознакомиться с формой заявки, условиями договора о задатке и документацией, характеризующей предмет торгов, можно по адресу: **г. Чебоксары, Вурнарское ш., 11, телефон для справок 52-42-55, 44-07-49.**

ПРОДАЮ

2.Предлагаем по фабричным ценам в рассрочку: стенки, прихожие, спальни, шкафы, комоды, кровати, матрацы в магазине "Балахнинская мебель". Сборка, доставка. А.:Чеб., Гагарина, 11 (напротив Русского драмтеатра). **Тел. 56-41-21.** *Сертиф-но.*

6. Песок, гравмассу, щебень, **торф,** чернозём. **Услуги** КамАЗа. Т.: 8-927-667-96-10, 37-96-10.

8.Гравмассу, песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок** от производителя. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 89051990122.

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, дымоходы. Доставка, установка забора, монтаж крыши. Т. 444433.

18.Сетку-рабицу от производителя более 80 видов, **сетку** сварную более 30 видов, профнастил, гвозди, столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

25.Гравмассу, керамблок, песок. Доставка. Т. 8-902-327-75-85.

57.Гравмассу, щебень, **песок,** керамзит, **торф с доставкой** до 30 т за рейс. **Скидки.** Т.: 387015, 89276687015.

592.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

632.Керамблоки /20х20х40, 12х20х40/, **цемент, керамзит.** Т.: 89050284130, 89033462293.

666.Новые дизельные мини-тракторы. Т. 8-917-670-12-18.

693.Песок, гравмассу, цемент, к/б блоки. Т. 89276686728.

711.Новый КАМАЗ – 45143 2011 г. в. – ЕВРО1. Т. 373334.

УСЛУГИ

37.Бурение колодцев, скважин; **колодезные кольца, бордюры, керамблоки.** Доставка. Т.: 89656858975, 389696.

54.Лечение алкоголизма, табакокурения ежедневно с 9 час., в субботу – без записи. Обр.: Чеб., Энгельса, 2. Т. **621184.** Лиц. 2101000170 МЗ ЧР. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

КУПЛЮ

704.Бычков, телок, коров. Т. 482426.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Раççей Федерацийĕн Пичет комитетĕнче 1996 çулхи раштавăн 19-мĕшĕнче 015525 №-пе регистрациленĕ.
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353, "Сывлăх" – 11524, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
Т.В.ИЛЬИНА /яваплă секретарь/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор–тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.Х.ЛУКИЯНОВА, Н.Г.СМИРНОВА
Дежурнăй редактор Р.А.ВЛАСОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
28-85-87 – яваплă секретарь çумĕ
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21, 56-22-31, 28-83-67 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91, 28-85-33 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем, 56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
/8-835-51/ 2-12-90 – Хĕрлĕ Чутай, /8-835-32/ 6-11-82 – Патăрьел /8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Çç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
hypar2008@rambler.ru
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почти: pop408@rambler.ru hypar@chtts.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ компьютер центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел.: 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăçăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум",